27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 20 ШАМАТКУН 99(6594) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ

Майăн 20-мĕшĕнче шкул пурнăçĕн чи ответлă тапхăрĕ — пĕлӳ тĕрĕслевĕ пуçланать. Шкул вĕренекенсемпе учительсен çулталăкри ĕçне пĕтĕçтерет. Шкул хăйĕн вĕренекенĕсене мĕн пачĕ-ха? Шкул совет ачи-пăчисене, пирĕн çамрăксене — арçын ачасемпе хĕрачасене—мĕнле пĕлӳпе пуянлатрĕ-ха? Вĕренӳ çулĕнче ачасене хăрпăрхăйне обществăра тыткалама пĕлес тĕлĕшпе мĕнле хăнăхусем панă-ха, ĕç çине, ăслăлăх çине, обществăпа государство умĕнчи тивĕçе пурнăçлассп çине мĕнле пăхма вĕрентнĕ-ха тата вĕсене мĕнле çирĕплетсе хăварнă-ха?

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкул пурнăçĕнче çĕнни нумай пулса иртрĕ. Çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе лайăхлатассишĕн тăрăшса, пирĕн правительство питех те кирлĕ решенисем чылай йышăнчĕ: арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентмелле тунă, вĕренекенсен правилисене ĕçе кĕртнĕ, пĕлĕве сăмахпа хаклас вырăнне пилĕк цифрăллă системăпа хакламалла тунă т. ыт. те. Çутĕç органĕсем умне, пĕтĕм шкул умне вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне вирлĕн ӳстерес задача лартнă. Учителĕн вырăнне питĕ хытă ӳстернĕ, вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕс хаклас енĕпе ун çине пĕтĕм ответлăха хунă.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ, пуçламĕш шкулăн 4-мĕш класĕнчи тата вăтам шкулсен ытти класĕсенчи тĕрĕслӳ, — учительсемпе вĕренекенсен ĕçне государство тĕрĕслени пулать.

Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче вĕрентнĕ материала хытă ыйтасси, тимлĕх, шкулти ларутăру чаплă пуласси кашни шкулшăн закон пулса тăтăр. Çакă вăл, паллах, пĕлӳ тĕрĕслевне ачасене асаплантармалли туса хурассине пĕлтермест. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче ачасемпе пăшăлтатни, тавçăрса илмелли ыйтусем лартни, çав ыйтусене тĕрĕслӳ итогĕсем лайăхрах курăнччăр тесе, пĕлмен, хатĕрленмен вĕренекене «çăлас» шутпа лартаççĕ пулсан, вĕсем, паллах, сиенлĕ. Анчах хумханнă вăхăтра ачасене лăплантма, шухăшсене йĕркене кĕртме пулăшасси — совет учителĕн обязательнăй задачи пулса тăрать; чунсăр çын пек чĕмсĕр ларса ачасен пуçне çавăрмалла мар.

Тĕрĕслӳ кунĕсенче шкул ачисем хăйсем мĕнле пĕлӳ туяннине тĕрĕслеме май илеççĕ. Антив, учитель шкул ачине вĕренӳ, пурăнса ирттернĕ çулталăкăн пĕлтерĕшне, ăшчикне хаклама пулăштăр. Антив, вĕсем çакна туйса илччĕр: пĕлӳ тĕрĕслевĕ вăл — вĕренӳ çулĕн чи чаплă тапхăрĕ, вăл—çĕршыв умĕнче, хăйсен фронтри аппĕсем умĕнче тата хăрпăрхăй умĕнче отчет туни пулса тăрать.

Антив, шкул ачисем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хумханса пыччăр,—çакăн пек хумханнинчен хăрамалла мар; пĕлĕве тĕрĕслессине учительсемпе вĕренекенсем «тусăн» тĕл пулнă пек ирттермелле мар, çакă вăл хăшпĕр шкулсенче пулнă. Шкул ачи ответлăха туйма тивĕçлĕ, вăл çакна пĕлсе тăтăр: унăн пĕлĕвĕсене çирĕп, анчах та тĕрĕс хаклаççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче эпир шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевне виççĕмĕш хут ирттеретпĕр. Шкула вăрçă кунĕсенче [illegible]

çирĕп шухăш-кăмăллă тата писĕхнĕ çынсем кирлĕ. Государство шкула вĕренекенсен пĕлĕвĕсене нихăçанхинчен те тĕрĕсрех хаклама хушать. Çук пĕлĕвех пур туса кăтартни пикамшăн та кирлĕ мар тата вăл сиенлĕ.

Вĕрентӳ ĕçĕнче ăмăртăва пăрахăçлани тата учитель ĕçне шкул ачисен пĕлĕвĕн вăтам процентĕсем тăрăх хаклас сиенлĕ практикăна чарса лартни учительсене вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тӳрĕ те хăрпăрхăй тĕллĕн хаклама май параççĕ. Хут пĕлменлĕхе витсе пынă статистикăна пуçĕпех пĕтерсе лартнă. Учительсем шкул ачисен чăн-чăн пĕлĕвĕсене çеç шута илмелле. Вĕсем тĕрĕслӳре шкул ачисен пĕлĕвне ӳстерес задачăна шута илсе отметкăсем лартмалла.

Кăçал çар ĕçне мĕнле вĕреннине тĕрĕслесси хисеплĕ вырăн йышăнмалла. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентмелле тунине пула, тăван çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисене çар ĕçĕн мĕнпур хăнăхăвĕсемпе пĕлĕвĕсене ăнăçлăн вĕренсе алла илме условисем туса панă. Шкул çамрăкĕсем лайăх дисциплинăллă пулччăр, çарпа физкультура заданийĕсене кар тăрса хастаррăн, пĕлсе тата йĕркеллĕ пурнăçлаччăр,—акă мĕнле çамрăксем хатĕрлеме хушать кашни шкула, кашни класа, уйрăмах аслă классенче вĕренекенсене, Тăван çĕршыв! Кăçалхи тĕрĕслӳ шкулта çарпа физкультурăна вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшассине шанма пулать.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ хыççăн учительсемпе комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем хушшинчи çыхăну йĕркеленнĕçемĕн йĕркеленсе пырать. Пĕр пккеленмесĕрех каламалла: комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем пĕлӳ тĕрĕслевне организованно ирттерме учительсене пулăшĕç (вĕсем тĕрĕслӳ ирттермелли пӳлĕмсем хатĕрлеме, консультацисем ирттермелли пӳлĕмсем хатĕрлеме, шкулти классене тул енчен илемлетме, залсене илемлетме пулăшĕç, дежурнăйсем пулĕç тата ытти те).

Пĕлӳ тĕрĕслевĕнче туяннă пĕлĕвĕн шайĕ çеç мар курăнать. Унпа пĕрлех пирĕн умма вĕренекенĕн шухăш-кăмăлĕ мĕнли, çамрăк совет гражданинĕн сăнарĕ яр-уççăн тухса тăрать.

Иртнĕ çулсенчи тĕрĕслӳсене аса илер. Вĕренекенсен нумай отвечĕсем, вĕсен контроллĕ çыру ĕçĕсем пирĕн лайăх учительсемпе директорсем вăл хурса ĕçлени мĕнле паха çимĕçсем паннне кăтартрĕç. Хуласемпе ялсенчи шкулсен аслă класĕнче вĕренекенсем нумайĕшĕ — Мускаврисем те, Ленинградрисем те, Свердловскрисем те, Тбилиссирисем те, Эреванрисем те тата ыттисем те—нумай ыйтусем çине тимлĕн пăхнипе савăнтарчĕç.

Пирĕн совет шкулĕ Ленин — Сталин партийĕн аслă идейисен ялавĕ айĕнче пурăнать, ĕçлет тата аталанса пырать. Партипе правительство халăха вĕрентессишĕн ывăнма пĕлмесĕр, тăван аппĕ-амăшĕ пек çине тăрса тăрăшаççĕ, вăрçă кунĕсенче халăха вĕрентессишĕн тăрăшассине пур майсемпе те ӳстерсе пыраççĕ.

[illegible]

(«Правда» хаçатăн майăн 19-мĕшĕнчи умствати).

Чехов кунĕсене ирттерме хатĕрленни

Пĕтĕм Союзри комитет А. П. Чехов вилнĕренпе 40 çул тултарнине уявласа ирттерме тумалли ĕçсене палăртса тухса çутсе-явнă. Июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче Педагогика наукисен академийĕн пĕрлехи пухăвĕ пулса иртет. Çав пухура А. П. Чехов пултарулăхĕ çинчен доклад тума палăртаççĕ. Государственнăй литература музейĕ çумĕнче А. П. Чехов [illegible] выставки пулать. Кайран çав выставкăран А. П. Чехов музейне пуçса тăмалла.

Государственнăй илемлĕ литература издательстви юбилей тĕлне А. П. Чеховăн чылай произведенийĕсене пичетлесе кăларать, кино-театрсенче А. П. Чехов произведенийĕсем тăрăх тунă фильмсем кăтартма пуçлаççĕ. [illegible] Серов художник А. П. Чехов сăнне ӳкернĕ. Халĕ çав картинăна йышлăн пичетлесе кăларасçĕ, çавăн пекех Чехов сăнне ӳкернĕ плакатсем, почта открыткисем нумай пичетлесе кăларасçĕ. (ТАСС).

Шкул ачисем тракторпа ĕçлеме вĕренчĕç

Ачасен республикăри техникăлла станцийĕ кăçал февраль уйăхĕнче çамрăк трактористсен курсне организациленĕ. Унта хулари арçын ачасен шкулĕсенчи 35 ача вĕренме çӳренĕ. Курса инженер-механик Калинин юлташ ертсе пынă.

Нумаях пулмасть çамрăк трактористсем вĕренӳ программине вĕçлерĕç. Тĕрĕслев ирттерсе 35 ачаран 18-шĕ «5», 15-шĕ «4», 2-шĕ «3» паллăсем илчĕç.

Анатолий Захаров, Виталий Михайлов, Борис Магуськин отличниксем хăйсем ирĕккĕнех тракторпа ĕçлеме вĕренсе пĕтерчĕç. Халĕ çураки вăхăтĕнче вĕсем [illegible] ĕçне хутшăнса ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Анатолий Соловьев, Юрий Матвеев, Аркадий Андреев, Виталий Тадыкин, Михаил Стамнов çамрăксем те вĕренсе пынă. Вĕсем тракторпа пайĕсене лайăх пĕлеççĕ.

Трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă шкул ачисем çуллахи каникул вăхăтĕнче колхоз уйĕсенче ĕçлеме каяççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Лашапа трактор—иккĕшĕ те паттăр

Вĕсене юратса, лайăх пăхмалла, вара вĕсем хăйсен вăйхăватне кăтартĕç, çуракинче пире çĕнтерӳ кӳрĕç

Чăваш АССР Наркомземĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕ тăратнă тăрăх, тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне срокчен тултарнă çак МТС-сене ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

11. **Шăхасан МТС-ĕ** (директорĕ **Н. К. Константинов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **Н. Т. Тимофеев** юлташ, старши механик **Н. Н. Северов** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 112,5 процент тултарнă, 3.606 гектар вырăнне 4.058 гектар сухаланă, 3.050 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Бригадирсем: Н. М. Михайлов, унăн бригади çуркуннехи ĕçсен планне 110 процент тултарнă; **Ф. Г. Григорьев,** вăл плана 103,5 процент тултарнă, 280 килограмм горючи перекетлесе хăварнă; **И. Ф. Филиппов** — плана 103 процент тултарнă, 210 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Чи лайăх трактористсем: А. Северов, С. Е. Егоров, Н. Н. Рубков, У. Я. Яковлева, З. И. Иванова, Н. А. Андреев, А. Микушкин, вĕсем кашни сменăра 4 гектар вырăнне 6—8-шар гектар сухаланă, горючие 60 килограмран пуçласа 150 килограмма çитиччен перекетлесе хăварнă.

12. **Красноармейски МТС** (директорĕ **А. К. Константинов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **А. Н. Николаев** юлташ, старши механик **Б. И. Виноградов** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 100 процент тултарнă, 3.310 гектар вырăнне 3.312 гектар сухаланă, 700 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Бригадирсем: У. Н. Николаева, унăн бригади çуркуннехи ĕçсен планне 147 процент тултарнă, 500 килограмм горючи перекетлесе хăварнă; **Е. Н. Иванова,** вăл плана 144 процент тултарнă, 200 килограмм горючи перекетлесе хăварнă; **А. Мокеев** — плана 115 процент тултарнă; **П. А. Можаров**—плана 122 процент тултарнă.

Чи лайăх трактористсем: О. М. Мефодева, Т. Н. Никифорова, А. А. Можарова, Е. Н. Николаева, М. Егоров, вĕсем кашни сменăра 3,7 гектар вырăнне 6—7-шер гектар сухаланă.

45 колхоз тĕштырăсем акса пĕтернĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЙ, майăн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Паянхи кун тĕлне татах 17 колхоз тĕштырăсемпе пăрçа-ясмăксем акса пĕтерчĕç. Çапла ĕнтĕ районри 76 колхозран 45 колхоз тĕштырă акмалли плана тултарнă. «Çĕнĕ ял», «Пятилетка», «Комбайн», «Малалла», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç.

«Малалла» колхозăн планпа 265 гектара 9 ĕç кунĕ хушшинче акса пĕтермеллеччĕ, вăл 8 ĕç кунĕнче акса пĕтерчĕ. Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă колхозниксем çуракинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. А. Иванова, 15 çулхи В. Владимиров, Е. Степанова, С. Соснина юлташсем ĕç нормисене кулленех 120—125-шер процент тултарса пычĕç. Колхозра столовăй ĕçлени ĕç тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшрĕ. Колхозниксене кунне икĕ хутчен уйра ĕçлекенĕ çĕртех апатлантараççĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилерĕç. А. Крыловăпа П. Матвеев агитаторсем уйра ĕçлекен колхозниксене фронтри тата тĕнчери хыпарсемпе, Совет Информаци Бюровĕн сводкисемпе куллен паллаштарса пыраççĕ. Кашни бригадăрах стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тухса тăраççĕ. Çураки вăхăтĕнче бригадăсем, звеносем тата уйрăм колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн саралса кайрĕ. Бригадăсем хушшинчи ăмăртура В. Максимова коммунистка ертсе пыракан бригада малта тухрĕ.

Тĕштырăсемпе пăрçа-ясмăксене акса пĕтернĕ колхозсем халĕ çĕрулми лартаççĕ, техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем акаççĕ, кая юлнă колхозсене социализмлă пулăшу парас ĕçе организацилеççĕ.

С. ШАДИН.

* * *

ИШЛЕЙ, майăн 16-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районра малта пыракан «МОПР», Молотов, Калинин тата Водопьянов ячĕсемпе тăракан колхозсем паян пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕç. Ĕç пахалăхĕ пур тĕлте те лайăх. Халĕ унта çĕрулми тата техникăллă культурăсем акмалли вырăнсене сухалаççĕ.

Водопьянов ячĕпе тăракан колхозра паян пĕр гектар ытла çĕрулми лартрĕç.

А. ПАВЛОВ.

Тĕштырăсене паян-ыранах акса пĕтеретпĕр

ЧУРАЧАК, майăн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Пирĕн районри колхозсем, вăйлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çуракине кĕске вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттерме шутлачĕç. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн колхозниксемпе колхозницăсем ака вăхăтĕнче фронтри пек ĕçлеççĕ.

Ĕнерхи кун тĕлне çураки планне районĕпе 74 процент пурнăçланă. Вĕсенчен сеялкăсемпе акни 75 процент пулать. Тĕштырă вăрлăхĕсене яровизацилесе акнă. Яровизацилемелли плана районри колхозсем 106,9 процент пурнăçларĕç.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене ĕнерхи кун тĕлне 44 колхоз акса пĕтерчĕ. Ĕç пахалăхĕ пур тĕлте те аван. Çураки ĕçĕсене нумай колхозсем 6—7 ĕç кунĕ хушшинче пĕтерчĕç. Çакăн пек тухăçлăн та пахалăхлăн ĕçлени чăн малтанах колхозсенче уйрăм сдельщинăна йĕркеленинчен, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янинчен килчĕ. «Новая сила», «Победа» колхозсенче кашни колхозник уйрăм участокра, конкретнăй задани илсе ĕçлерĕ. Çак колхозсенче кулленхи нормăна тултараймасăр сухаçă, сӳрелекенсем акансем та пулман.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтернĕ колхозсем халĕ çĕрулми лартаççĕ, кайрах юлса акакан тырăсене тата техникăллă культурăсене акма тытăнчĕç. «Прогресс» колхоз майăн 17-мĕшĕ тĕлнех 10 гектар, «Победа» колхоз 1 гектар çĕрулми лартрĕç, кун ĕç «Красная Чувашия», «Молодая сила» тата ытти колхозсенче те хĕрсех пырать.

Анчах та пирĕн районра «Гигант», «Малти Ямаш» пек юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Малти Ямаш» колхозра (председателĕ Давыдов юлташ) пĕр кун хушшинче икĕ касăллă 9 плугпа 5—6 гектар кăна сухалатчĕç. Мĕнрен килнĕ-ха çакăн пек япăх ĕçлени? Тӳрех калас пулать, кунта ĕçе пĕлсе организацилемен, уйрăм сдельщина пулман, кулленхи нормăсене шухăшласа пуман, вĕсене тултарассишĕн тăрăшса ĕçлемен. Йĕкĕрварти «Шурămпуç» колхозра вара нумайччен «тăпра чĕрĕ» тесе акана тухмарĕç, çавна пула 2—3 кун кая юлчĕç. Çак колхоз руководителĕсем çаврăнăçусăр пулчĕç. Каярахпа вĕсем хăйсен йăнăшĕсене туйса илчĕç, анчах лайăх кунсем иртсе кайрĕç, ака ĕçĕ тăсăлса пычĕ. Вара вĕсемпе кӳршĕллĕ колхозсем вĕсене социализмлă пулăшу пама кăмăл турĕç. «Шурămпуç» колхоза кӳршĕри «Труд» колхоз ака тума 4 лаша ячĕ, «Красный пахарь» колхоза та «Красный Восток», «Первое мая» колхозсем пулăшма 4-шар лаша ячĕç.

Тĕштырăсемпе пăрçа-ясмăксене паян-ыранах акса пĕтеретпĕр.

Çураки ĕçĕсемпе пĕрлех эпир кĕрхи калчасене пăхассине те лайăх организацилерĕмĕр. Майăн 18-мĕшĕ тĕлне 1480 гектар çĕнчи калчасене апат панă, 235 гектар сӳреленĕ. Халĕ колхозниксем кĕр калчисене çум курăкĕсенчен тасатаççĕ тата пачаçтарах вырăнсене тепĕр хут апатлантараççĕ.

И. ФЕДОРОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ, МТС-сем çуракинче мĕнле ĕçленине пăхса тухса, çакна палăртнă: Шăхасанпа Красноармейски МТС-сем çураки планне тултарнă, çакăнпа пĕрлех нумай машинно-тракторнăй станцисем çуракинче начар ĕçлеççĕ-ха. Пуринчен ытларах çаксем начар ĕçлеççĕ: Пăрачкав МТС-ĕ, вăл плана мĕн пурĕ те 13 процент çеç тултарнă, Улатăр МТС-ĕ — плана 16 процент, Етĕрне МТС-ĕ — 28 процент, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ — 30 процент çеç тултарнă.

МТС-сем çав тери начар ĕçлени, чи малтан, тракторсем техника енчен юсавсăр пулнă пирки тата вĕсене начар пăхнă пирки вĕсем нумай вăхăт хушши ĕçсĕр ларнинчен килет. Çапла, акă, Етĕрне МТС-ĕнче майăн 15-мĕшĕнче, çĕмĕрĕлнĕ пирки тата техника енчен юсавлă пулман пирки, 36 трактортан 14 трактор ĕçлемен, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн çав кун тракторсен 20 процентĕ ĕçсĕр ларнă.

Юсавлă пулман пирки çав тери нумай трактор ĕçсĕр ларнă пулин те, нумай МТС-сенче трактор бригадисене техника енчен пулăшас ĕçе организацилемен, куçса çӳрекен ремонт мастерскойĕсем туман, тракторсене хиртех юсас ĕçре тата техникăллă тĕрлĕ çитменлĕхсене сирсе ярас ĕçре трактор бригадисене пулăшассине йĕркелемен. Нумай МТС-сенче диспетчер службине организацилемен, çавăн пирки МТС-сен руководителĕсем кашни трактор бригадинче ĕçсем мĕнле пынине пĕлмеççĕ, çав бригадăсене техника енчен вăхăтра пулăшма пултараймаççĕ.

Хăшпĕр МТС-сен руководителĕсем чи опытлă бригадирсене куçса çӳрекен механиксем туса хурас вырăнне, кая юлнă бригадăсене пулăшас сăлтавпа хăйсен куçса çӳрекен механикĕсене трактор бригадисен бригадирĕсем туса хураççĕ, çапла вара тракторсен ĕçне тĕрĕслесе тăма тата вĕсене техника енчен пулăшса тăма пултараймаççĕ.

Çак факта, акă, чăтса тăма çук: тракторсене кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра юсамалли плана пурнăçланă хыççăн нумай МТС-сен ремонт мастерскойĕсем ĕçлеме пăрахнă, вĕсен станокĕсем ĕçсĕр лараççĕ, тракторсене тата комбайнсене хирте юсама кирлĕ пайсене тума чарăннă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ хирти ĕçсене лайăх туса ирттерме кирлине çирĕп асăрхаттарса хăварнă пулин те, хăшпĕр МТС-семпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсем çуракинче агротехникăна пăсаççĕ, фигурлă тата ăшăх сухалаççĕ, шăйраксем хăвараççĕ, вăхăтра сӳрелемеççĕ тата ытти те. Çапла, акă, Вăрмар районĕнчи «Тубах» колхозра сурхи çĕртме тунă 10 гектар çĕре 7—8 сантиметр тарăнăш çеç сухаланă. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн трактор бригадисем нумайĕшĕ сухаланă участоксен пусĕсене тепĕр хут сухаласа тӳрлетмеççĕ.

ВКП(б) райкомĕсем нумайĕшĕ агротехникăна çапла пăснипе килĕшсе лараççĕ, колхозсен правленийĕсем вара çуракине вăрăма тăсассинчен хăраса, трактор бригадисенчен начар тунă ĕçех йышăнаççĕ.

Чăваш АССР Наркомземĕ машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕсем çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмасть, вĕсене çителĕклĕ тĕрĕслемест, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмасть. ВКП(б) Обкомĕ темиçе хут та асăрхаттарнă пулин те, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ уйрăмах кая юлнă МТС-сен — Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне МТС-сен — ĕçĕсене йĕркелесе яма кирлĕ таран мерăсем йышăнман, çавăн пирки те вара çав МТС-сем хăйсен ĕçне лайăхлатас вырăнне ăна чылай начарлатнă.

Çĕнĕ МТС-сене — Засурски, Сурмайдански, Калинински, тата Октябрьски МТС-сене организацилес ĕç чăтма çук вăраха кайрĕ. Çав çĕнĕрен тунă МТС-сене халиччен те кирлĕ кадрсем çителĕклĕ тупса паман, машинăсемпе тракторсем кирлĕ чухлĕ паман, нефть хуçалăхне организацилемен. Хăшпĕр МТС-сен руководителĕсем çĕнĕрен тунă машинно-тракторнăй станцисене чи кивелнĕ тата юсавлă мар тракторсемпе кăкармалли орудисем панă, Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ государствăна хирĕçле ĕçсем тăвакан çав çынсене ответ тыттарман. Çĕнĕрен организациленĕ МТС-сен халĕ те хăйсен ремонт мастерскойĕсем, запаслă пайсен склачĕсем çук, çавăнпа вĕсен ытти МТС-сенчен пулăшу ыйтмалла пулать.

ВКП(б) Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри тата Етĕрне райкомĕсем машинно-тракторнăй станцисен ĕçне начар ертсе пыраççĕ, вĕсене тĕрĕслемеççĕ, партин МТС-сенчи пуçламĕш организацийĕсене трактор бригадисенче массăллă-политикăллă ĕçе тата социализмлă ăмăртăва йĕркелесе яма пулăшмаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа вăл машинно-тракторнăй станцисене çителĕклĕ ертсе пыманнипе тата çав станцисем çуракинче питĕ япăх ĕçленипе кăтартса парас.

2. Малов юлташа, МТС-сен директорĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене МТС-сен çуракинчи çакăнта кăтартнă çитменлĕхĕсене халех пĕтерсе лартма тата тракторпа тумалли ĕçсен планне 100 процентчĕпех пурнăçламалла тума хушас.

Трактор бригадисене техника енчен пулăшас ĕçе лайăхлатмалла, тракторсене техника енчен пăхас тĕлĕшпе тунă пур правилăсене те тĕплĕн пурнăçласа пымалла, шанса панă тракторсем техника енчен мĕнле тăнишĕн трактористсен ответлăхне тĕпренех ӳстермелле. Трактор бригадисене техника енчен пулăшассине, тракторсене хиртех юсас тата техникăлла çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес ĕçре пулăшассине лайăхлатас тесе, кашни МТС-ăн кашни трактор бригадипе куллен çыхăнса тăмалла, кашни трактор бригадин бригадирĕ хăйĕн тракторĕсем мĕнле ĕçлени çинчен МТС-а куллен пĕлтерсе тăтăр, МТС руководителĕсем çĕмĕрĕлнĕ тракторсене юсама кирлĕ запаслă пайсене çийĕнчех трактор патне çитерччĕр, вĕсем патне куçса çӳрекен ремонт мастерскойне е куçса çӳрекен механика яччăр.

Малов юлташа кашни МТС валли кирлĕ чухлĕ механик тупса çирĕплетме хушас.

3. МТС-сен директорĕсене машинно-тракторнăй станцисен ремонт мастерскойĕсене халех çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнма, тракторсене тата ялхуçалăх машинисене хиртех юсама кирлĕ запаслă пайсем тăвас ĕçре мастерскойсенчи станоксемпе туллин усă курма хушас.

4. Трактор бригадисенче тата МТС-сен нефть базисенче горючипе сĕрмелли материалсене пăхса усрас тата расходлас ĕçре кирлĕ пек йĕрке тумалла. Горючие ытлашши расходласа пĕтерсен, ăна мĕншĕн ытлашши расходланине пĕлмелле те малашне уп пек çитменлĕхе пĕтермешкĕн кирлĕ мерăсем йышăнмалла. Кашни бригадăрах горючипе сĕрмелли материалсене усрама нӳхрепсем тата лупассем тумалла, çав материалсене тĕплĕн хураламалла.

5. Пăрачкав МТС-ĕн директорне Салмин юлташа, Кувакино МТС-ĕн директорне Прозоров юлташа, Улатăр МТС-ĕн директорне Училихин юлташа, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн директорне Ижутов юлташа, Етĕрне МТС-ĕн директорне Перлович юлташа тата Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне райкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсене Рябов, Новиков, Горбунов, Вахнин, Сомов юлташсене çав МТС-сем çуракинче питех те начар ĕçленине асăрхаттарас, вĕсене машинăсемпе тракторсен ĕçне татăклăн лайăхлатма, МТС-сем кая юлнине пĕтерме хушас.

6. Малов юлташа çĕнĕрен организациленĕ Засурски, Сурмайдански, Калинински тата Октябрьски МТС-сене халех пулăшу пама хушас. Вĕсене ремонт мастерскойĕсем, нефть базисем тата складсем часрах тума пулăшмалла, июнĕн 1-мĕшĕччен тракторсем, кăкармалли машинăсем тата кадрсем çителĕклĕ тупса памалла.

7. МТС-сен директорĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене тракторсем мĕнле ĕçленине çирĕп тĕрĕслесе тăма, агротехникăна пăсакансемпе татăклăн кĕрешме хушас.

МТС-сен директорĕсене çакăн пирки асăрхаттарас: вĕсен ĕçне сухаласа акнă гектарсен хисепĕ тăрăх çеç мар, çав гектарсем çинчен пухса илнĕ тыррăн хисепĕ тăрăх та хаклĕç.

Машинăсемпе тата тракторсемпе туллин усă курмалла пултăр тесе, МТС-сен директорĕсене тракторсене талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттерме, çавăн пекех тата çуракинче агрегатпа ытларах ĕçлеме хушас.

8. ВКП(б) райкомĕсене машинно-тракторнăй станцисен ĕçне куллен тĕрĕслесе ертсе пыма хушас. Трактор бригадисенче массăллă-политикăллă ĕçе тăтăшах туса пымалла, çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн тата 1944 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн трактористсем хушшинче чăн-чăн социализмлă ăмăрту сарса ямалла. Социализмлă ăмăрту мĕнле пынине яланах тĕрĕслесе тăмалла, унăн результачĕсене пурне те кăтартмалла, трактор бригадисене хăйсен социализмлă обязательствисене пурнăçлас ĕçре вăхăтра пулăшмалла.

9. ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене 5 кун хушшинче партин МТС-сенчи пуçламĕш организацийĕсем валли ытти ĕçсенчен хăтарнă секретарьсем тупса пама тата вĕсене çирĕплетме ВКП(б) Обкомне тăратма хушас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 18-мĕшĕнче фронтсенче пăлтă улшăнусем пулман.
Майăн 17-мĕшĕнче нимĕçсен 10 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçăн подразделенийĕсем, тăшмана аталанса, пĕр пахă çуллĕ вырăна туртса илнĕ. Нимĕçсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 90 салтакпа офицер вилли вырăнта юлнă. Пирĕннисем 5 пулемет, 2 миномет, 65 винтовкăпа автомат тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем тăшманăн темиçе атакине сирсе янă, гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă. 40 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тыткăна илнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн унччен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланса пăхнă. Ирхине нимĕçсен пехотипе танкĕсем атака пуçласа янă. Пирĕннисем вĕсене артиллерипе тата минометсемпе, пулеметсемпе, пăшалсемпе пеме пуçланă, гитлеровецсен пысăк çухатусем кӳнĕ, вара нимĕçсем каялла чакнă. Нимĕçсем хыç хыççăн тунă атаксем те ăнăçлă пулман. Кун каçиччен пирĕн подразделенисем тăшманăн 600 салтакне офицерне çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕç пехотин 3 отрячĕ, артиллерипе тата минометсемпе хӳтĕленнĕ хыççăн, разведка тума хăтланса пăхнă. Совет боецĕсем тăшмана çывăха янă та вăйлă пеме пуçланă. Нимĕçсем хăйсен позицийĕ патне чакма лекнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 60 вилли ытла вырăнта юлнă.

* * *

Мозырь хулинчен хĕвеланăçнерехре рядовой Москалев юлташ боевой охранение тăнă чухне тĕл персе 2 нимĕç офицерне вĕлернĕ. Снайпер сержант Кнутов юлташ юлашки кунсенче 11 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Майăн 17-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн портра тăракан транспорчĕсене пырса çапнă. Бомбăсем тӳрех пĕр транспорт тивнипе 3.000 тонна тăракан пĕр судно шыва путнă, тепĕр суднине чылай вăйлă сиенленĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ пĕр ялти нимĕç гарнизонне çавăрса илнĕ. Хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Партизансем гитлеровецсен пĕр рота чухлĕ пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 2 туп, 11 пулемет, темиçе вунă винтовка тата 10.000 патрон тытса илнĕ. Тепĕр районра гитлеровецсем партизансен хирĕç карательнăй экспедици янă. Экспедицире 600 çынна çити пулнă. Хытă çапăçнă хыççăн совет патриочĕсем карательсен пур атакине те ăнăçлă сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Çак кунсенче нимĕç генералĕ Дитмар радиопа каласа, вăл, Крымра пулнă ĕçсем çинчен ăнлантарса панă. Геббельс хӳрешки, вăл хăй пурнăçлама пултарайман задачăна илнĕ. Сăмахран, Дитмар нимĕç çарĕсене Крымра аркатса тăкни «нимĕç командованийĕн питех те паллă ăнăçлăхĕ» пулса тăрать тесе иснĕ. Вăл çапла калать: «эпир Крымран унта тĕп вăйсене кăларма вăхăт çитнĕ чухне кăна кайрăмăр, ятарласа пирĕн хамăр кĕрлĕ çĕре хӳтĕлесе тăнă чаçсен пысăк пайне те куçарса килме ĕлкĕртĕмĕр», — тенĕ.

Анчах та Дитмар çакăн çинчен нимĕн те шарламан: Хĕрлĕ Çар Крымра пĕтерсе тăкнă е тыткăна илнĕ 111.000 салтакпа офицер Крымри тĕп вăйсен шутĕнче тăнă-ши е, вĕсем тĕп вăйсене куçарас ĕçе хӳтĕлесе тăнă чаçсен шутĕнче пулнă-ши.

Тыткăна илнĕ нимĕç офицерĕсем Крым çурутравĕ çинчи нимĕç çарĕсене епле илсе тухни çинчен пачах урăхла каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсен 111-мĕш пехотнăй дивизийĕн штабĕн тыткăна лекнĕ начальникĕ подполковник Александер Франц çапла каласа кăтартнă: «Гитлер Крымри нимĕç çарĕсене темĕн чухлĕ вăй пĕтсен те Севастополе хăйсен аллинчех хăварма хушса приказ панă. Крыма пирмаях пополнени пырса тăчĕ. Анчах та кырăссем, пирĕн оборонăна татса, Севастополе йышăнчĕç. Вара тин командовани кусĕретĕнех кая юлнă приказ пачĕ: Херсонес çинчи хăватлă позицисене тытса тăмалла, çав хушăра çĕмĕрсе тăкнă çарсен юлашкийĕсене Крымран илсе тухма тăрăшмалла. Пирĕн участокра 30.000 салтак таран капланса тулчĕ. Çав шутран пĕр пин салтак ытларах илсе тухма пулчĕ-ши, çук-ши. Майăн 10-мĕшĕнче эпĕ Камышевая бухтине 4 судно кĕнине куртăм, анчах та унтан иккĕшĕ кăна тухрĕç. Ытти 2 суднине вырăссен авиацийĕ шыва путарнă. Çавăнтанпа эпĕ урăх нимĕнле карап та курман. Пирĕн лару-тăру йывăрланнăçемĕн йывăрланса пычĕ. Дивизи командирĕ Грюнер генерал Максим Горький районĕнчи оборонăна йышăнма хушрĕ. Анчах та салтаксем йĕркерен тухса кайрĕç. Вĕсем пурте тинĕс патнелле чупма пуçларĕç, юлашки минутăра та пулин пĕр-пĕр судно килсе çитмĕ-ши тесе ĕмĕтленчĕç. Офицерсем, хĕçпăшалпа хăратса, салтаксене позицисем йышăнтарма хăтланчĕç, анчах та вĕсен ĕç тухмарĕ. Эпир хамăр алăри салтаксене текех хамăра пăхăнтарма пултараймарăмăр. Пурте арпашса кайрĕç, йĕри-тавра йĕркесĕрлĕх пуçланса кайрĕ. Пирĕн çухатусем минутсеренех ӳссе пычĕç. Вара аслă офицерсем парăнма шутларĕç. Пирĕн ушкăн 10.000 çын таран алăри хĕçпăшала пăрахрĕ. Часах ытти ушкăнсем те тыткăна парăнчĕç. Çапла Крымри нимĕç çарĕсем пысăк катастрофа тӳсрĕç».

Çак сăмахсем нимĕçсен çарне Крымра аркатса тăкнине тĕрĕс кăтартса параççĕ, вĕсем нимĕçсен суйма хăнăхнă Дитмар генералне пĕтĕмĕшпех тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Ют çĕршывсенче

Вашингтон штачĕн сеначĕ Югослави ыйтăвĕпе йышăннă решени

НЬЮ-ЙОРК, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Кăнтăрти славянсем пулса ӳснĕ американецсен пĕрлешнĕ комитечĕ» хăйĕн бюллетенĕнче çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Вашингтон штачĕн сеначĕ нумаях пулмасть резолюци йышăннă, вăл унта Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствинчен Югославири партизансен правительствине «фашистла çĕршывсене хирĕç пыракан кĕрешӳре демократиллĕ Югославин представителĕ вырăнне шутласа» официально йышăнма ыйтнă, «çапла туни Балканри халăхсене хăйсен пулас политикăллă, экономикăллă тата культурăллă пурнăçне палăртса хума тата чăнчăн демократи йĕркипе аталанса пыма май пана пулĕччĕ», тенĕ.

Резолюцире сенат Югославин эмиграци правительствинчи реакциллĕ çынсене хирĕç калана, çав элементсем, вăрçă хыççăн Югославире демократие хирĕç пыракан правительство туса хурасшăн пулса, демократие хирĕçле майсемпе ĕçлеççĕ. Резолюцире Тито маршалăн çар руководствине мухтанă, вăл фашистла çĕршывсен вăйĕсене хирĕç тăрас ĕçе, çавăн пекех тата Югославин диктаторла правительствин реакциллĕ вăйĕсене хирĕç тăрас ĕçе питĕ чаплă организацилене. Резолюцире тата çапла калана: партизансем Германин 16 дивизине хăйсем патĕнче тытса тăраççĕ, унсăрăн çав дивизисемпе Италире Америка çарĕсене хирĕç усă курнă пулĕччĕç. Çапла вара, партизансем темиçе пин американецăн пурнăçне сыхласа хăвараççĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КАССИНО ХУЛИПЕ ФОРМИЯ ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

АЛЖИР, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Кассино хулине туртса илнĕ, Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Формия хулине туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ПЛОЕШТИПЕ БЕЛГРАД ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Белградпа Плоешти хулисене, çавăн пекех тата Югославири Ниш чугун çул узелне тапăннă.

ДАНИ ПАРТИЗАНĔСЕН ПАТТĂР ĔÇĔ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Дани патриочĕсен пĕр паттăр ĕçĕ çинчен калакан тĕплĕ хыпарсем çитнĕ. Датчансен Копенгаген çывăхĕнчи çар авиацийĕн мастерскойĕпе хальхи вăхăтра нимĕçсем усă кураççĕ. Çав мастерскойпа çывăхри аэродром ангарĕсем тавра минăсем лартса тухнă. Унсăр пуçне тата унта нимĕçсем яланах вăйлă хурал тăраççĕ. Дани патриочĕсем мастерскойри рабочисем пек тумланнă та сменăсем улшăнмалли вăхăтра аэродрома пынă. Хурал тăракан нимĕç салтакĕсем ăна-кăна асăрхаман, мĕншĕн тесен çав патриотсем, минăсене ăçта лартса тухнине пĕлекен рабочисем пекех, минăсем хушшипе тӳп-тӳрĕс утса пынă, çавăнпа нимĕç хуралçисем вĕсене пĕр чармасăрах кĕртсе янă. Мастерскоя кĕрсе кайсан, партизансем рабочисене пурне те бомбоубежищĕсене пытанма хушнă. Вара вĕсем мастерской тата ангара бомбăсем хурса тухнă. Часах вăйлă взрывсем янăраса кайнă. Пур мастерскойпа ангар та унти самолетсемпе пĕрлех сирпĕнсе кайнă. Тапăнакансем пурте тарса пытанма ĕлкĕрнĕ.

БОЛГАРИРИ ПАРТИЗАНСЕМ

СТАМБУЛ, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Болгари партизанĕсем юлашки вăхăтра чугун çулсем çинче тата нимĕçсем валли ĕçлекен предприятисенче сăтăрла ĕçсем чылай туса ирттернĕ. Ассеновграда тата Горна Джумаяра йывăç çуракан заводсене çунтарса янă. Казаклыкра боеприпас складне сирпĕнтерсе янă. Купницапа Кочариново станцийĕсем хушшинчи полигонра вăрçă япалисем турттарса пыракан нимĕçсен поездне ӳпĕнтерсе янă.

ФИНЛЯНДИ ТРАНСПОРЧĔ ИШĔЛНИ

СТОКГОЛЬМ, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндирен илнĕ хыпарсем тăрăх, вагонсемпе паровозсем кивелсе çитнĕ пирки тата горючи çитменнипе, Финлянди транспорчĕ япăхланса çитнĕ. Çӳрекен автобуссен шучĕ уйăхран уйăха чакса пырать. Финсен «Хельсингин Саномат» ятлă хаçачĕ ĕнер çапла пĕлтернĕ: финсен влаçĕсем йышăннă тăрăх, автобус çулĕсене нумайĕшне хупса лартаççĕ.

РУМЫНИ ÇАРĔНЧЕ ТУМТИР ÇИТМЕСТ

СТАМБУЛ, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни влаçĕсем хăйсен çарне тăхăнтарма тумтир çитменнипе аптăраççĕ. Çак кунсенче Румынин çар министерстви приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, çарă илекен çынсен хăйсемпе пĕрле тăхăнмалли кĕпе-йĕм икшер мăшăр илсе пымалла. Приказра çапла калана: çав кĕпе-йĕм çара илнĕ çын тăракан çар чаçĕн пурлăхĕ пулса тăрать, тенĕ.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ИДЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 17-мĕшĕнче общинăсен палатинче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден çапла каланă: Японире тыткăнри тата интернированнăй йĕркепе пурăнакан çынсене Совет Союзĕ урлă посылкăсем ярасси çинчен тунă килĕшӳ Англи [illegible]

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем оккупантсемпе Хорватире хаяр кĕрешеççĕ. Лика фронтĕнчи участоксенче тата Коренница çывăхĕнче нимĕçсене чылай пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Хĕвелтухăç Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем, çитĕнĕве вăйлатса пырса, Живиницăна йышăннă, тăшманăн темиçе çĕр салтакран тăракан колоннине аркатса тăкнă. Словенире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем пуçарулăха хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ. Сербире Ужице районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Далмацире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем нимĕçсен пысăк вăйĕсене хирĕç тăрса хытă çапăçаççĕ.

РУЗВЕЛЬТ ХĔÇПĂШАЛА КИВÇЕН Е АРЕНДĂНА ПАРАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНĂН СРОКНЕ ТĂСМАЛЛИ ЗАКОНОПРОЕКТА АЛĂ ПУÇНИ

ВАШИНГТОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Рузвельт хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен калакан законăн срокне малалла тăсакан законопроекта алă пуснă.

ДОМИНИОНСЕН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ ХУПĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян доминионсен премьер-министрĕсен конференцийĕ хупăннă. Конференцин ĕçĕсем çинчен халăха çак эрнере пĕлтерĕççĕ.

ФРАНЦУЗСЕН КОНСУЛЬТАЦИ АСАМБЛЕЙИН РЕШЕНИЙĔ

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Алжирти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: французсен консультаци асамблейи паян пĕр саслă пулса çак сĕнĕве йышăннă: Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитета «Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви» тесе ят памалла.

Консультаци асамблейи Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитета ирĕке кăларнă территорисене мĕнле йĕркепе тытса тăмалли çинчен союзниксемпе килĕшӳ тума хушнă.

ГЕРМАНИ ТУРЦИЕ ПРОТЕСТЛЕСЕ ПАНĂ НОТА

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсем каласа кăтартнипе, майăн 11-мĕшĕнче фон Папен Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Менеменджиоглуна нота панă. Нотăра мĕн каланине нимĕçсем пичетре çывăхри кунсенчех пĕлтерессĕн пулман. Анчах çапах та нотăра пушĕн пулман. Анчах çапах та нотăра пуринчен те вăйлăрах çакăн çине кăтартса каланине пĕлнĕ: 1) Турци, Германие хром яма пăрахса, Германипе тунă килĕшӳве пăснă, Германи çав килĕшӳре кăтартса панисене хăй енчен пурне те пурнăçа кĕртнĕ; 2) Турци, çавăн пек хăтланса, нейтралитет принципне пăсать, Германипе туслă пурăнас йĕркене çĕмĕрет. Нотăра çапла калана: Турци хăйĕн решенине тепĕр хут пăхса тухса улăштарассине Германи шанса тăрать, унсăрăн Германи правительствин хăй енчен хирĕçле мерăсем йышăнмалла пулать, тенĕ.

Çав лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсем каласа панă тăрăхах, фон Папен Анкарана çав нотăна пама кăна тавăнман, Анкарана вăл пуринчен те ытларах Турци союзниксем ыйтнине ан итлетĕр, Германие таварсем яма ан пăрахтăр тесе тавăннă.

КĔСКЕН

● Италие Кăнтăр Африкăран 6-мĕш бронетанковăй дивизи пырса çитнĕ.

▲ Бадольо правительстви Сфорца «фашистла преступленисем тата закона хирĕç тунă ĕçсем» тĕлĕшпе ĕçлекен комиссар пулма лартнă.

▲ Венгрин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ хушнă тăрăх, пĕтĕм Венгри территорийĕнче пухусем, политикăллă тавлашусем тума чарса лартнă.

ЛИТЕРАТУРА ХЫПАРĔСЕМ

Халăх поэчĕ С. В. Эльгер юбилейĕ

Майăн 27-мĕшĕнче чăваш совет писателĕсен Союзĕ халăх поэчĕ С. В. Эльгер çуралнăранпа 50 çул тултарнине уявласа ирттерет. Юбилее ытти республикăсенчи литература организацийĕсен представителĕсем, фронтри писательсемпе поэтсем килеççĕ. Поэтăн пурнăçĕпе творчестви çинчен А. Эсхель юлташ доклад туса парать.

Иван Малгайăн творчествăллă каçĕ

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ майăн 17-мĕшĕнче Иван Малгай поэтăн творчествăллă каçне туса ирттерчĕ. Поэт творчестви çинчен Стихван Шавлы доклад турĕ, Иван Малгай хăйĕн юлашки вăхăтра çырнă сăввисене вуласа пачĕ. Каçра пухăннă юлташсене уйрăмăнах «Шурă кăвакарчăн», «Тăлăх ача», «Ялти письмоносец», «Хĕрпе каччă» сăвăсем кăмăла кайрĕç.

Малгай сăввисен сборникĕ кăçал Чăвашсен государство издательствинче пичетленсе тухать.

„Чăваш халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче" ятлă киносценари

Чăваш драматургĕ И. С. Максимов-Кошкинский «Чăваш халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче» ятлă киносценари çырса пĕтерчĕ. Сценари тăрăх ӳкернĕ фильм чăваш халăхĕ вăрçă вăхăтĕнче тунă чаплă ĕçсене кăтартса памалла.

Уçырмари драмкружокăн ĕçĕсем

КАНАШ. Уçырмасен драмкружок тахçантанпах пур. Унта колхоз çамрăкĕсемпе учительсем тăраççĕ.

Иртнĕ çулта кружок членĕсем 18 спектакль ытла лартнă. Пухăннă укçаран 10.000 тенкине оборона фондне хывнă. Ытти укçапа артистсене кирлĕ япаласем (гримсем, пьесăсем т. ыт. те) илнĕ.

Комсомолка А. Иванова юлташ ертсе пынипе драмкружок иртнĕ çулта художествăллă пултарулăхăн районри смотрĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Çавăн пекех çывăхри ялсенче те чылай спектакльсем лартса панă. Курма пынисем çамрăк артистсем выляннине яланах ырланă.

Драмкружок çулран-çулах хăйĕн пултарулăхне ӳстерсе пырать. Халĕ кружок членĕсен хисепĕ 30 çынна çитрĕ. Кăçал тăватă уйăх хушшинче колхозниксене 10 хутчен спектакль лартса панă. Вĕсенче «Телейлĕ каç», «Велипе», «Кукша Иван» пьесăсене уйрăмах лайăх выляса панине палăртмалла. Кăçалхи художествăллă пултарулăх смотрĕнче драмкружок «Телейлĕ каç» пьесăна лартса «отлично» хак илнĕ.

И. МАКСИМОВ.

Пушартан сыхланаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Именкассинчи «Молния» колхозри пушар дружини (начальникĕ фронтовик П. Титов юлташ) лайăх ĕçлет. Колхозра пушарпа кĕрешмелли инвентарьсем (насус, шыв пички, урапа) пурте юсавлă. Вĕсене П. Титовпа колхоз тимĕрçи И. Димитриев юлташсем юсанă.

Пушар дружининче 12 çын. Вĕсем кашниех хăйсене хушнă ĕçсене вăхăтра туса пыраççĕ. Дружина членĕсем хальк илĕрен çӳресе колхозниксем пушартан епле сыхланнине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче хăшпĕр çуртсенче мăръесем юсавсăрри, каткасемпе шыв лартманни, çӳп-çапсене тасатманни палăрнă. Çак çитменлĕхсене колхозниксем сийĕнчех пĕтернĕ. Çавăн пекех колхоз хуçалăх (лаша витисем, ферма килкартисем) таврашĕнчи тасамар вырăнсене йĕркене кĕртнĕ. Колхоз пурлăхне сыхлама çирĕп хурал тăратнă. Каçсерен 10 килрен пĕрер çын тухса яла хурал тăраççĕ.

Кунсăр пуçне колхозниксем кăçал çуртсем умне çĕнĕрен 300 тĕп йывăç лартма палăртнă. Вăл шутран 50 тĕпне колхоз çуртйĕрĕсем патне лартнă.

И. АНДРЕЕВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Госстрахăн Чăваш республикинчи управленийĕ çакăн çинчен пĕлтерет: колхозсен акнă тыррисене, сад пахчисемпе çырла пахчисен çимĕçĕсене пăр çапса е каясран, вăйлă çумăр çапасран, тăвăлсенчен, ӳссе ларнă çĕртех çунса каясран, ытлашши шĕвесрен, шыв юхтарса каясран, тăм илесрен тата ейӳ илесрен страхланă, кок-сагыз, махорка, табак, тмин тата хăмла калчисене кунсăр пуçне тата типĕ уяртан та страхланă.

Кĕрхи тырăсем тата нумай çул хушши ӳсекен акнă курăксем юр айĕнчен тухса ӳсме тытăнсан колхозсен вĕсене пăхса тухмалла та сиен пулнине пĕлсен 5 кун хушшинче Госстрах инспекцине заявка памалла. Çав заявкăра сиен курнă культурăсен акнă лаптăкне, миçе процент сиен курнине тата мĕн пысăкĕш лаптăка тепĕр хут пăсса акма кирлине кăтартмалла.

Асăрхаттарни: заявкăна кая юлса парсан, сиене саплама асăр ирттерме пултарассĕ (обязательнăй страховани çинчен калакан законăн 42-мĕш статйи).

2—2

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш 96-мĕш тата 98-мĕш номерĕсенче).

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРАХ

11. Мария Ивановна **Мамуткинăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
12. Елена Михайловна **Морескинăна**— Коминтерн ячĕпе тăракан райземхозăн агрономне.
13. Никита Ильич **Сидорова** — Коминтерн ячĕпе тăракан колхозăн кĕтӳçине.
14. Андрей Матвеевич **Тибокейкина**— Коминтерн ячĕпе тăракан колхозăн пчеловодне.
15. Василий Федорович **Шипколина**— райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
16. Степан Петрович **Эзенкина** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.

КУВАКИНО РАЙОНĔ ТĂРАХ

1. Андрей Афанасьевич **Герасина** — «Красный передовик» колхозăн колхозникне.
2. Григорий Степанович **Ерофеева** — «Новь» колхозăн колхозникне.
3. Екатерина Семеновна **Зеленинăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
4. Михаил Иванович **Кузина** — «12 лет Октября» колхозăн колхозникне.
5. Василий Лаврентьевич **Кукарова**— «К свету» колхозăн конюхне.
6. Михаил Дмитриевич **Куклева** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
7. Петр Ефимович **Ляхова** — «Новь» колхозăн колхозникне.
8. Василий Федорович **Нежнова** — машинно-тракторнăй станцин трактористне.
9. Елена Ефимовна **Сельховăна**— «12 лет Октября» колхозăн садоводне.
10. Николай Дмитриевич **Таракакова** — «Пролетарий» колхозăн колхозникне.
11. Михаил Тимофеевич **Шведкона** — Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн сурăх пăхаканне.
12. Анастасия Елементьевна **Югановăна**—«12 лет Октября» колхозăн колхозницине.
13. Александра Николаевна **Яковлевăна**—машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРАХ

1. Федор Афанасьевич **Авдеева** — «Верный путь» колхозăн старши конюхне.
2. Нульяна Агаповна **Агаповăна** — «Восток» колхозри фермăсен заведующине.
3. Анисия Марковна **Андреевăна** — «Красная Армия» колхозăн дояркине.
4. Николай Иванович **Амосова** — «Труд» колхозăн колхозникне.
5. Алексей Михайлович **Вахнина** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
6. Федор Яковлевич **Веенина** —

вая деревня» колхозăн председательне.

7. Галина Антоновна **Гойкона** — «Пищевик» колхозăн колхозницине.
8. Александр Семенович **Грибоедова**— «Правда» колхозăн председательне.
9. Александра Григорьевна **Григорьевăна** — «Октябрь» колхозăн сысна пăхаканне.
10. Анна Семеновна **Даниловăна** — «Красная Армия» колхозăн бригадирне.
11. Яков Данилович **Данилова**—«Правда» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
12. Иван Степанович **Ерикова**—райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникне.
13. Зоя Вячеславовна **Ефимовăна** — райçĕрĕç пайĕн вăрлăх тĕрĕслекен лабораторийĕн заведующине.
14. Сергей Семенович **Железкова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.
15. Демид Игнатьевич **Игнатьева** — «Социализм» колхозăн председательне.
16. Игнатий Александрович **Камбулова** — «Красная звезда» колхозăн машиноведне.
17. Валентина Корниловна **Корниловăна** — «Искра» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
18. Мартьян Львович **Львова**—«Большевик» колхозăн садоводне.
19. Мария Григорьевна **Лукояновăна**— «Новая деревня» колхозăн колхозницине.
20. Клавдия Федотовна **Майоровăна** — «Коминтерн» колхозăн колхозницине.
21. Валентина Ивановна **Меркуловăна** —райçĕрĕç пайĕн участокри ветеринари техникне.
22. Семен Павлович **Павлова**—Киров ячĕпе тăракан колхозри фермăсен заведующине.
23. Василиса Прокопьевна **Прокопьевăна** — «Правда» колхозăн сурăх пăхаканне.
24. Мария Николаевна **Протасовăна**— райçĕрĕç пайĕн участокри зоотехникне.
25. Григорий Павлович **Смелова** — «Сĕнтĕрпуç» колхозăн колхозникне.
26. Парасковья Степановна **Степановăна** — райçĕрĕç пайĕн участокри агрономне.
27. Петр Иванович **Титова** — райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
28. Наталия Николаевна **Тюриковăна** —Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
29. Александра Семеновна **Яруковăна** — «Коминтерн» колхозăн пахча-çимĕç бригадин бригадирне.

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРАХ

1. Василий Игнатьевич **Андреева** — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
2. Михаил Андриянович **Андриянова** —«Пионер» колхозăн пчеловодне.
3. Аркадий Семенович **Арабкина** — «Свобода» колхозăн конюхне.
4. Мария Васильевна **Быковăна** — Аталай ялсовет исполкомĕн председательне.
5. Григорий Андреевич **Бочкина** — «Красная Чувашия» колхозăн председательне.
6. Василий Никонович **Волкова** — «Красное Сормово» колхозăн счетоводне.
7. Дмитрий Петрович **Вязова**—Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
8. Михаил Иванович **Вязова**—«Крестьянин» колхозăн председательне.
9. Ксения Григорьевна **Григорьевăна** — «Красное Сормово» колхозăн пăру пăхаканне.
10. Клавдия Егоровна **Егоровăна** — Каганович ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
11. Кондратий Ефимович **Ефимова** — «Самолет» колхозăн старши конюхне.
12. Мария Афанасьевна **Ефимовăна** — Буденный ячĕпе тăракан колхозăн лаша ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадин бригадирне
13. Степан Кириллович **Кириллова** — «Авангард» колхозăн председательне
14. Клавдия Антоновна **Ковалевăна** — Свердлов ячĕпе тăракан колхозри уйхир бригадин бригадирне.
15. Иосиф Алексеевич **Кожанова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.
16. Яков Артемьевич **Кольцова**—Муркаш ялсовет исполкомĕн председательне.
17. Дария Алексеевна **Красновăна** — Доронин ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
18. Михаил Яковлевич **Краснова** — Шетмĕпуç ялсовет исполкомĕн председательне.
19. Евдокия Федоровна **Музыковăна**— «Знамя труда» колхозăн чăх-чĕп пăхаканне.
20. Василий Николаевич **Налимова** — «Восток» колхозăн старши конюхне.
21. Яков Николаевич **Николаева** — «Звезда» колхозăн председательне.
22. Христина Павловна **Оньковăна** — Буденный ячĕпе тăракан колхозăн лаша фермин конюхне.
23. Мария Тимофеевна **Потаповăна** — райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникне.
24. Иван Иванович **Петровских** — «Свобода» колхозăн председательне.
25. Емельян Егорович **Пугачева** — Буденный ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи выльăхсене искуственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктăн заведующине.
26. Егор Романович **Романова** — «Çĕнĕ хунав» колхозăн старши конюхне.
27. Антон Семенович **Семенова**—«Свобода» колхозăн сысна пăхаканне.
28. Тимофей Сергеевич **Сергеева** — «Пионер» колхозăн председательне.
29. Сергей Матвеевич **Соловьева** — «Красное Сормово» колхозăн ферма заведующине.
30. Евдокия Степановна **Степанована** —«Сесмеры» колхозăн колхозницине.
31. Тимофей Федорович **Федорова** — «Звезда» колхозăн ферма заведующине.
32. Федор Яковлевич **Яковлева**—«Сталинец» колхозăн старши конюхне.

(Малалли пулать).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0-67, заместитель секретарĕн — 4-26, парти пурнăç пайĕн — 3-99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5-31, издательство конторин — 0-23.

НТ 06513 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.